Хыпар
# Çĕнтерӳ çулĕ
1930 çулхи ноябрĕн 1-мĕшĕнчен тухать
электронлă адрес: print@vurnar.cap.ru
Вăрнар район хаçачĕ
2011 çул
ака/апрель/ уйăхĕн
2-мĕшĕ
•
шăмат кун
36-37/10354/ №
Хакĕ ирĕклĕ

## Африка чуми Чăваш ен «хапхи» çывăхĕнче...

### Прогноз тунă тăрăх, сыснасен африка чуми çулсерен кăнтăртан çурçĕрелле 350 километр хăвăртлăхпа сарăлса пырать

**Кăнтăр тата Çурçĕр Кавказ федераци округĕсенче хăрушă чирпе 2007 çултанпа кĕрешеççĕ. Анчах та африка чумин вирусĕн тĕсĕсем тĕрлĕрен пулнăран, суту-илӳ-туяну ĕçĕ анлă сарăлнăран чир-чĕрпе кĕрешме çăмăл мар. Акă Оренбург, Ленинград облаçĕсенче, Санкт-Петербургра çак инфекцин «вучахне» виçĕ хутчен регистрациленĕ. Чăваш Республикинчен инçех мар вырнаçнă Чулхула облаçĕнче те хăрушă чир ернĕ сыснасене тупса палăртни лару-тăру çивĕчленсе пынине яр уççăн кăтартать. Юн кун Раççей ял хуçалăх асăрхавĕн республикăри управленийĕн конференц-залĕнче «Сыснасен африка чуми Чăваш ен «хапхи» çывăхĕнче» темăпа журналистсемпе пресс-конференци ирттерчĕç.**



**ÇИВĔЧ ЫЙТУ**

– Кăçалхи пĕрремĕш кварталта Раççей Федерацийĕнче африка чумин 15 «вучахне» регистрациленĕ. Пĕлтĕрхи кăтарту – 79, çав шутран килти сыснасем – 59, хир сыснисем – 20. Африка чумипе кĕрешме паянхи кун вакцина çук. Вирус сарăласран инфекци çăлкуçне тупса палăртнă вырăнти мĕн пур сыснана тĕп тăваççĕ, выльăхсем тытнă витесене çунтарса яраççĕ, – терĕ Раççей ял хуçалăх асăрхавĕн Чăваш енри управленийĕн ертӳçи Иван Дмитриев. – Ку анчах мар. Сысна ĕрчетессипе тимлекен хуçалăхсен те, инфекци çăлкуçĕнчен 5–20 километрта вырнаçнисен, выльăхсене аш-какай комбинатне васкавлăн ăсатма тивет.

Африка чуми питĕ пысăк тăкак кӳрет. Чир сарăласран карантин йĕркине туса хунăран çулсене вăхăтлăха хупаççĕ, ăнăççăр зонăра сысна ашне сутма чараççĕ. Сысна ĕрчетессипе тимлеме çулталăк иртсен кăна ирĕк параççĕ. Африка чуми килти хушма хуçалăхсенчи «чух-чухсене» ытларах ернине çирĕплетеççĕ ветеринарипе фитосанитари асăрхавĕн федераллă службин ĕçченĕсем. Сăлтавĕ – вирус пур апата выльăхсене çитерни. Иван Дмитриев каланă тăрăх, сыснасене памалли апата 70 градус таран пăшăхлани инфекци ересрен хăтарать.

«АПК аталанăвĕ» наци проекчĕпе килĕшӳллĕн выльăх-чĕрлĕх ĕрчетессипе тăрăшма ял хуçалăх организацийĕсем те, пуçарулла çынсем те çăмăллăхлă кредита тивĕçрĕç. Çавна пула акă хамăр районта та «чух-чухсен» хисепĕ ӳсрĕ – 17837 пуçа çитрĕ, çав шутра аграрисенче – 13964 пуç ( е иртнĕ çулхи çак тапхăртинчен 28 процент ытларах). Вăрнарти аш-какай комбинатĕнче кăна 11772 пуç сысна тытаççĕ. «Луч» кооператив та сысна ĕрчетессипе курăмлă тимлет. Африка чуми района кĕрес-тĕк ĕç-пуç мĕнле вĕçленме пултарни çинчен сăмах пуçарас та килмест. Инкек-синкекпе республикăра та, хамăр тăрăхра та кĕрешмелле ан пултăрччĕ.

Африка чуми пирĕн республика «хапхинчен» ан кĕтĕр тесе тĕллевлĕ ĕçлеççĕ, ведомствăсенчен оперативлă штаб, ĕç ушкăнĕ йĕркеленĕ. Профилактика мероприятийĕсем ирттерессине пысăк тимлĕх уйăраççĕ. Раççей ял хуçалăх асăрхавĕн тата ГИБДД ĕçченĕсем рейдсене тăтăшах çӳреççĕ, çĕр-шывăн тĕрлĕ кĕтесĕсенчен килекен автотранспорта тĕрĕслесех тăраççĕ. Выльăхсем сывă тата выльăх-чĕрлĕх продукцийĕ, апачĕ пахалăхлă пулнине çирĕплетекен ветеринари докуменчĕсем пĕрле пулмалла. Йĕркелĕхе пăснăшăн кăçал 65 уйрăм çынна тата организацие административлă явап тыттарнă. Сысна ĕрчетессипе тимлекен хуçалăхсене тĕрĕслесех тăраççĕ. «Чух-чухсене» хупă витесенче тытманшăн суд йышăнăвĕпе республикăри пĕр предприятие ĕçлеме чарнă. Хушма хуçалăхсенчи сыснасене учета илессипе те тимлеççĕ, вĕсем çине биркăсем çакаççĕ. Хир сыснисене те пăхса-асăрхаса тăраççĕ.

*Африка чумипе çыхăннă ыйтусене сӳтсе явма пулăшма Раççей ял хуçалăх асăрхавĕн республикăри управленийĕнче «вĕри лини» уçнă. Т.52-72-18.*

**Е.ТИКИНЕВА.**

## Çирĕп мерăсем кирлĕ

Наркомани чирĕ обществăра сарăлсах пырать. Наркотиклă япаласем пысăк хуласенчен аякри ялсене те хăвăрт çитрĕç, çулсеренех чылай çамрăк вĕсен витĕмне кĕрсе ӳкет. Обществăри чи сиенлĕ пулăмсенчен пĕри пулнă май, çирĕп мерăсем йышăнмасăр наркотиксен саккунсăр çаврăнăшне хирĕç тăма май çук.

Пĕлтĕр районти оперативниксем 27,87 грамм марихуана, 6,78 грамм мăкăнь туни, мăкăнь опийĕн экстрактне 1,13 грамм, 18,481 грамм гашиш саккунсăр çаврăнăшран кăларнă. Хăй тĕллĕн ӳсекен мăкăнь тĕмисене «Мăкăнь–2010» ятарлă операцисем вăхăтĕнче «Черемушки» коллективлă садри усă курман участоксенче тупнă, пĕтĕмпе 12,5 тăваткал метр лаптăк çинче тĕп тунă.

Наркотиксем районта ан сарăлччăр тесе, çамрăксене çак сиенлĕ наркăмăшран хӳтĕлес тĕллевпе йĕрке хуралçисем профилактика мероприятийĕсем ирттереççĕ, учетра тăракансене тĕрĕслеççĕ т.ыт.те. Ку ушкăнри преступленисене асăрхаттарассипе мĕнле ĕçлени çинчен шалти ĕçсен районти пайĕн уголовлă шырав уйрăмĕн пуçлăхĕ Станислав Николаев каласа пачĕ:

«Шалти ĕçсен Вăрнар районĕнчи пайĕ акă пĕлтĕр наркотиксен саккунсăр çаврăнăшĕпе çыхăннă 6 преступление тупса палăртнă. Вăрнартах А.Данилов виçĕ çынна тĕрлĕ виçепе марихуана сутнă тĕслĕхсем пулнă. Ун тĕлĕшпе пуçарнă уголовлă ĕçсене район сучĕ пăхса тухнă, арçынна 5 çуллăха ирĕк прависĕр хăварнă. А.Николаев вара кăнтăрлах автовокзал çывăхĕнче марихуана сутса янă. Пĕлтĕрхи сентябрьте Вăрнар çынни С. Кириллов Çĕрпӳ çывăхĕнчи уйра кантăр çулçисем пухса çӳренĕ, кайран вĕсене килĕнче упранă. Ăна условнăй майпа пĕр çуллăха ирĕкрен хăтарнă.

Наркотиксене саккунсăр майпа упракансене, сутакансене палăртасси, вĕсене преступлени тума парас марри – пирĕн тĕп тĕллевсенчен пĕри. Çавăнпах çамрăксем пухăнакан вырăнсене уйрăм тимлĕхе илтĕмĕр. Вăрнарти тата Калини-

2 стр.

## Йыш чакнă

### Росстат Пĕтĕм Раççей халăхĕн 2010 çулхи çыравĕн малтанхи кăтартăвĕсене пĕтĕмлетнĕ

**ÇЫРАВ – 2010: пĕтĕмлетӳ**

**Росстат пĕлтернĕ тăрăх – пирĕн çĕр-шывра 142905,2 пин çын пурăнать. Экспертсен шутлавĕпе килĕшӳллĕн Раççей халăхĕн йышĕ сакăр çулта (2002 çулхи çыравранпа) 2,3 млн çын е 1,6 процент (урăхла каласан çуллен вăтамран 275 пин çын) сахалланнă.**

Çухатăвăн тĕп сăлтавне сăнавçăсем вилеслĕх пысăккипе (уйрăмах арçынсен) ăнлантарма пăхаççĕ. Çавăнпах ĕнтĕ вĕсен тӳпи Раççей халăхĕн пĕтĕм йышĕнче каллех 46,6 процент таран чакнă. Кунсăр пуçне унччен совет республикисем шутланнă патшалăхсенчен мигрантсем куçса килни те, демографи лару-тăрăвне лайăхлатас тĕллевпе йышăннă программăсем те çĕр-шывра пурăнакансен хисепне пысăклатма пулăшаймарĕç.

Сăмах май, çырав пĕтĕмлетĕвĕсем тăрăх халăх федерацин Центрти (27 процент) тата Атăлçи (21 процент) округĕсенче йышлăн тĕпленнĕ. Çавăнпа пĕрлех Раççейре чылайăшĕ хулара пурăнма кăмăллать. Çĕр-шыв çыннисенчен кашни тăваттăмĕшĕ кăна яллă вырăна килĕштерет.

Халăх йышĕн ӳсĕмĕпе Мускав хули тата облаçĕ малта пыраççĕ. Федерацин Центрти округĕн ытти регионĕнче йыш чакнă. Вĕсенчен чылайăшĕнче ялсем пĕтсе пыраççĕ. Урăхла каласан çĕр-шывăмăр урбанизацин аслă çулĕ çине тăнă. Çакна хула халăхĕн шучĕ 73,7 процента çитни те аван çирĕплетет.

Федерацин Çурçĕр Кавказ округĕнче, Дагестанра икĕ çырав хушшинче халăх – 15,6, Чечен Республикинче – 15, Ставрополь крайĕнче 1,9 процент йышланнă. Вак халăх çыннисем сахалланса пыни сисĕнет: тĕслĕхрен, сакăр çулта коряксен чĕрĕк пайĕ, комисен 15 процентĕ чакнă.

Çухату Магадан тата Мурманск облаçĕсенче, Камчаткăра, çавăн пекех Ингушетире сисĕмлĕ.

Путишле пулăм та сиксе тухнă-мĕн: «эльфсемсĕр», «гоблинсемсĕр», «хоббитсемсĕр» пуçне Раççейре ытти «нацилĕх» те тупăннă: сăмахран, Ставрополь крайĕнче – пĕр «штукатур», Çĕпĕрте «фараон» пурăнаççĕ.

Сакăр çулта халăх йышне сыхласа хăварма кăна мар, ăна ӳстерме те пултарнă 20 регион хушшинче – пирĕнпе кӳршĕллĕ Тутарстан,

2 стр.

**ÇАНТАЛĂК**

| Вырсарни кун | | Тунти кун |
|---|---|---|
| 3.04 | | 4.04 |
| кăнтăрла | +5 | +5 |
| çĕрле | +2 | +2 |

| Ытлари кун | Юн кун |
|---|---|
| 5.04 | 6.04 |
| +5 | +4 |
| +1 | 0 |

*«Метеоновости» информаци агентствин информацийĕ тăрăх.*

**«Çĕнтерӳ çулĕ» хаçата 2011 çулăн иккĕмĕш çур çулĕ валли çырăнтармалли тапхăр пырать**

2011 çулхи июль–декабрь уйăхĕсенче «Çĕнтерӳ çулне» почта урлă илсе тăма унчченхи пекех – 187 тенкĕ те 80 пуспа – çырăнтараççĕ. Хаçата редакцие килсе илмелле те çырăнма пулать, хакĕ – 110 тенкĕ. «Çĕнтерӳ çулне» çырăннисем Вăрнар чиркĕвĕн прихучĕ кăларса тăракан «Георгиевский листок» хаçата малашне те тӳлевсĕр илсе тăрĕç.

**«Çĕнтерӳ çулĕ» хаçатсăр ан юлăр. Юратнă хаçата çырăнăр, вулăр!**

